87-16



# САРМАНТЕЙ





Пĕчĕк чухнех хитре кĕнекесем юрататтăм. Вĕсен асамлăхĕ мана яланах илĕртетчĕ, илемлĕх тĕнчине илсе кĕретчĕ. Кайран хам та ӳкерчĕксем тума пуçларăм. Халĕ те ачасем валли пăлханмасăр ӳкерейместĕп.

*Элли Юрьев,*
СССР художникĕсен Союзĕн членĕ,
Чăваш АССР тава тивĕçлĕ художникĕ.

# САРМАНТЕЙ

Сармантейĕн сарă чăххи сарă çămарта тунă. Ăна шăши пынă та хӳрипе çапса çĕмĕрнĕ. Сармантейĕ те йĕрет. Сарă чăххи те какалать.

Хапхи калать, тет:





— Манăн та уçăлса хупăнас,— тет.

Анать, тет, пĕр вăкăр шыва.

— Хапха, эсĕ мĕншĕн уçăлса хупăнатăн? — тесе ыйтать, тет.

— Уçăлса хупăнмасăр. Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă. Ăна шăши пынă та хӳрипе çапса çĕмĕрнĕ. Сармантей те йĕрет, сарă чăххи те какалать! — тет.

Вăкăр калать:

— Эппин, манăн та мĕкĕрес пуль,— тет.

Мĕкĕрсе анать, тет, шыв хĕррине. Шыв калать:

— Мĕншĕн, вăкăр, мĕкĕретĕн? — тет.

— Мĕкĕрмесĕр. Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă, тет. Ăна шăши пынă та хӳрипе çапса çĕмĕрнĕ, тет. Сармантей те йĕрет, тет, сарă



чăххи те какалать, тет, хапхи те уçăлса хупăнать, тет.

Шыв калать:

— Манăн та хумханас, эппин,— тет.

Пĕр çĕнĕ çын шыв ăсма анать.

— Шыв, эсĕ мĕншĕн хумханатăн? — тет.

— Хумханмасăр,— тет шывĕ. — Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă, тет. Ăна шăши пынă та хўрипе çапса çĕмĕрнĕ, тет. Сармантейĕ те йĕрет, тет, сарă чăххи те какалать, тет, хапхи те уçăлса хупăнать, тет. Вăкăрĕ те мĕкĕрет, тет.

Çĕнĕ çын калать:

— Манăн та витрене çапса çĕмĕрес,— тет.

Çапса çĕмĕрет витрине çĕнĕ çын. Тавăрăнать киле. Хунямăшĕ чуста çăрать, тет:



— Кин, мĕншĕн хăрах витрепе анчах ăсса килтĕн? — тет.

— Хăрах витрепе анчах пулмасăр,— тет.— Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă, тет, ăна шăши пынă та хӳрипе çапса çĕмĕрнĕ, тет. Сармантей те йĕрет, тет, сарă чăххи те какалать, тет, хапхи те уçăлса хупăнать, тет, вăкăрĕ те мĕкĕрет, тет, шыв та хумханать,— тет.

Хунямăшĕ калать:

— Манăн та чустана кăларса ывăтас, эппин,— тет.

Кăларса ывăтать, тет, чустине.

Ывăлĕ кайнă вăрмана. Таврăнать вăрмантан. Ывăлĕ калать:

— Мĕншĕн яшка пĕçермерĕр? — тет.



Амăшĕ калать:

— Сармантейĕн сарă чăххи сарă çăмарта тунă. Ăна шăши пынă та хӳрипе çапса çĕмĕрнĕ. Сармантей те йĕрет, сарă чăххи те какалать, хапхи те уçăлса хупăнать, вăкăрĕ те мĕкĕрсе анать, шыв та хумханать, çĕнĕ çын та хăрах витрине çапса çĕмĕрнĕ,— тет.

Ывăлĕ калать:

— Манăн та хăрах атта кăларса ывăтас,— тет. Вăл та хăрах аттине кăларса ывăтрĕ, тет.

Пĕтрĕ.

